## «Кĕмсĕртетмест çӳлте ахаль…»

*Саккун хăвачĕпе кунтан*
*Ют çĕрсене тытса ярсассăн,*
*Тен, пурте ютшăнĕç манран –*
*Эсĕ усал ятпа ан асăн.*
*М.Ю. Лермонтов. 1831*

Кĕмсĕртетмест çӳлте ахаль
Арçурилле усал асамăç –
Иккĕленӳсĕр паллă халь:
Пире вăрах тытса усрамĕç.

Пирĕн шăв-шав, пирĕн сăмах
Какришсене кăшт пăталарĕ.
Пĕр йышчĕ халăхшăн тăма,
Анчах та халăх мĕн каларĕ?

Эпир, тен, пĕртте кирлĕ мар?
Эпир, тен, çĕтĕк аркă вĕçĕ?
Ăçти хĕлхем, мĕнле кăвар
Пире хавхалантарчĕ вĕçĕм?

Çӳлтен аçа çапать те шарт
Пулса юлатпăр татнă касăк.
...Хăçан пулин мана та асăн,
Сĕтел çине пĕр çăкăр ларт.

*1962*

*Станьял, В. «Кĕмсĕртетмест çӳлте ахаль...» / В. Станьял // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 424.*